28-мĕш çул тухать. Ханĕ 20 пус.

1945 НОЯБРЬ 10 ШАМАТКУН 218 (6969) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Советĕн тата Шупашкар хула совечĕн хаçатĕ

СССР Оборона Халăх Комиссарĕн
ПРИКАЗĔ

1945 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ — *№ 75* — *Мускав хули*

Юлташсем — красноармеецсем, сержантсем, офицерсем тата генералсем!

Паян пирĕн çĕршыври халăхсем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине уявлаççĕ. Фашистла вăрă-хурăсене хирĕç тăвата çул хушши халлăн вăрçнă хыççăн эпир хамăрăн пĕтĕм халăх праçникне пĕрремĕш хут мирлĕ условисенче кĕтсе илтĕмĕр.

Сур çул каялла Хĕрлĕ Çарпа пирĕн союзниксен — Америкăри Пĕрлешӳлĕ Штатсемпе Великобританин — çарĕсем пĕрле кĕрешсе, гитлерла Германие çĕмĕрсе тăкрĕç, ун хыççăн вара Япони агрессорне те аркатса тăкрĕç. Тĕрĕслĕх ĕçĕ çиеле тухрĕ. Пĕтĕм тĕнчери инкĕмĕт вăрçă Пĕрлешнĕ Нацисем аслăн та чаплăн çĕнтерипе вĕçленчĕ.

Тăшмана çĕнтерес ĕçре Совет Союзĕ ĕçе татса паракан теп вырăн йышăннипе эпир савăнса мухтанма пултаратпăр. Фашистла захватчиксене аркатса тăкас ĕçе пирĕн совет халăхĕ пуринчен ытларах вăй хучĕ. Вăл хăй хăватлă халăх пулнине, унăн çарĕ чи малта тăракан кучухнехи çар пулнине ĕçре кăтартса пачĕ.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци тата вăл туса хунă совет стройĕ пирĕн вăйăн миксĕлми çăлкуçĕсем пулса тăвĕç. Октябрьти революци тата унăн аслă çĕнтерĕвĕсем пулман пулсан, пирĕн çĕршыва ют çĕршыв захватчикĕсем тытса илме пултарнă пулĕччĕç.

Отечественнăй аслă вăрçăра пирĕн çĕршыв пысăк çухатусем тӳрĕ, анчах та вăл çав вăрçăран тата вăйлăрах та çирĕпрех пулса тухрĕ. Вăрçа пула рабочисемпе хресченсен тата интеллигенцин союзĕ тĕрекленчĕ. Пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕ туптанса çирĕпленчĕ. Совет çыннисем большевиксен партийĕ тавра тата таччăнрах пĕрлешрĕç. Пирĕн социализмлă хуçалăха немĕç оккупанчĕсем пысăк сиен кӳнĕ пулин те, вăл хăйĕн пурнăç вăйне тата малалла аталанмалли çав тери йышлă майĕсене сыхласа хăварчĕ. Ытти государствăсем хушшинче Совет Союзĕ хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнчĕ. Ытти çĕршывсенчи демократилĕ массăсем пирĕн çĕршыва пĕтĕм тĕнчери мирĕн шанчăклă тĕрекĕ тесе шутласçĕ. Хĕрлĕ Çара вара—халăхсем хушшинчи туслăхăн çарĕ тесе, хăйсен ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхне хисеплекен çар тесе шутласçĕ.

Халĕ ĕнтĕ, тăшмана çĕнтернĕ хыççăн, ирĕклĕхе юратакан халăхсен тĕп задачи —хамăр гунă çĕнтерĕве çирĕплетесси тата ĕçре çирĕп те нумай пыракан мир туса хурасси пулса тăрать.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Совет государстви умĕнче фронт интересĕсем, тăшмана пĕтĕмпех аркатса тăкас задачăсем чи малти вырăнта тăчĕç. Хальхи вăхăтра пирĕн умма хуçалăхпа культура строительствин задачисем пĕтĕм анлăшĕпе тухса тăчĕç. Совет халăхĕн халăх хуçалăхне юсаса малалла аталантармалли пилĕкçуллăх плана пурнăçа кĕртмелле, пирĕн çĕршывăн материальнăй тата духовнăй вăйĕсене малалла чечеклентерсе ӳстермелле, çапла туса, хамăран Таван çĕршывăн çарпа экономика хăватне тата ытларах çирĕплетмелле.

Хĕрлĕ Çар умне—çĕнтерӳçĕ-çар умне çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç. Историре ак çакăн пек примерсем сахал мар пулнă: çĕнтернĕ çăроем, мăнкăмăлланса кайса вĕренме пăрахнине пула, хăйсен авалхи чапне çухатнă. Эпир лăпланса ларсан, пирĕн, çĕнтерӳçĕсем цикамран та нимĕн те вĕренмелли çук ĕнтĕ тесе шухăшлама пуçлас пулсан, пирĕн хĕçпăшаллă вăйсем те çавăн пек хăрушлăхран хăтăлаймĕç.

Хĕрлĕ Çăран çитĕнӳсене пула пуç çаврăнмалла мар. Пĕтĕм Хĕрлĕ Çарăн вĕренмелле тата вĕренмелле. Отечественнăй аслă вăрçăри çапăçусен питĕ пăха опытне вĕренсе алла илмелле. Хальхи вăхăтра тĕп задача çавă пулса тăрать те ĕнтĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче Хĕрлĕ Çарта йышлă офицер кадрĕсем, социализмлă Таван çĕршыва чунтан парăннă, хăйсен ĕçне çав тери юратакан, практикăллă пысăк опыт туяннă офицерсен кадрĕсем ӳссе çитĕнчĕç. Хальхи вăхăтра, мирлĕ вăхăт условийĕсенче, Хĕрлĕ Çарти мĕнпур офицерсен хăйсен çарпа политика тата культура тавракурăмне сарас тĕлĕшпе куллен ĕçлемелле, вăрçă ĕçне çине тăрса вĕренмелле.

Хĕрлĕ Çар воинĕсем! Малашне те пирĕн социализмлă Таван çĕршывăн шанчăклă хӳралĕ пулса тăрăр! Çарпа политика тĕлĕшĕнчен хăвăр хатĕрленнине пысăлма пĕлмесĕр лайăхлатса пырăр, çарти дисциплинăна çирĕплетсе пырăр, пирĕн çăрăн шухăш-кăмăлне тата ытларах лайăхлатса ӳстерĕр!

Таван çĕршывăн чиккисем леш енче пурăнакан совет воинĕсем! Хамăр Таван çĕршывăн государство интересĕсене сыхă тăрса, чыслăн тата тивĕçлипе сыхласа пурăнăр!

Çартан киле янă воинсем! Гражданла ĕçре хăвăрăн патриотла тивĕçĕре лайăх пурнăсласа пырăр. Производствăра тата ялхуçалăхĕнче малта пыракан çынсем пулса ĕçлĕр, пирĕн çĕршывăн общественăпа политика пурнăçне активлăн хутшăнăр!

Юлташсем — красноармеецсем, сержантсем, офицерсем тата генералсем!

Сире Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа саламлатăп!

Пĕтĕм халăх праçникне паллă тумашкăн çапла тума хушатăп:

Паян, ноябрĕн 7-мĕшĕнче, пирĕн Таван çĕршывăн столицинче Мускавра, союзлă республикăсен столицисенче тата Ленинград, Сталинград, Севастополь, Одесса хулисенче артиллерирен çирĕм хут пĕр харăс персе салют памалла.

Сывă пултăр та чечекленсе ӳстĕр пирĕн хăватлă Советлă Таван çĕршыв!

Сывă пултăр аслă Совет халăхĕ, халăх-çĕнтерӳçĕ!

Сывă пултăр Хĕрлĕ Çар!

СССР Оборона Халăх Комиссарĕн Заместителĕ
Совет Союзĕн Маршалĕ А. ВАСИЛЕВСКИЙ.

СССР Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕн
ПРИКАЗĔ

1945 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕ — *№ 460* — *Мускав хули*

Юлташсем — краснофлотецсем, старшинасем, офицерсем, генералсем тата адмиралсем!

Пирĕн çĕршыв пĕтĕм халăх праçникне — Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине—фашистла немĕç захватчикĕсемпе Япони захватчикĕсене çĕнтернине пула тулнă мирлĕ условисенче кĕтсе илет.

Совет Союзĕн Хĕрлĕ Çарĕпе Тинĕс-Çар Флочĕ, пирĕн союзниксен хĕçпăшаллă вăйĕсемпе пĕрле çапăçса, гитлерла Германие, ун хыççăн вара империализмлă Японие те аркатса тăкрĕç. Çав историллĕ çĕнтерӳре Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсем ĕçе татса паракан тĕп вырăн йышăнчĕç.

Пирĕн Таван çĕршыв Хĕвеланăçĕнче немĕçсем тапăнас хăрушлăхран тата Хĕвелтухăçĕнче Япони агрессийĕ тапăнас хăрушлăхран хăтăлчĕ.

Совет халăхĕ тата унăн Хĕрлĕ Çарĕпе Флочĕ çĕнтерни Октябрьти Социализмлă Аслă Революцире çуралнă совет стройĕн çав тери пысăк вăйĕнчен, пирĕн Таван çĕршыври халăхсен çирĕп туслăхĕнчен, Ленин—Сталин партийĕ ăслăн ертсе пынинчен килчĕ.

Вăрçăн пысăк йывăрлăхĕсене чыслăн тата мухтавлăн тӳссе ирттерсе, Совет государстви тата хăватлăрах пулса тăчĕ.

Вăрçă çулăмĕнче пирĕн халăхăн моральне политика пĕрлĕхĕ çирĕпленчĕ, большевиксен партийĕпе Совет правительстви тавра тата таччăнрах пĕтĕçнĕ ĕçсыннисен массисен политикăллă ăпланулăхĕ ӳсрĕ. Совет халăхĕ мĕнпур халăхсен мирпе хăрушсăрлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ пулса тăракан Таван çĕршывăн çарпа экономика хăватне малалла çирĕплетес тĕлĕшпе çĕнерен мирлĕ ĕçе тытăнчĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕн Тинĕс-Çар Флочĕ Хĕрлĕ Çарăн çапăçури шанчăклă ютташĕ пулчĕ. Хамăр Таван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пынă хăяр çапăçусенче пирĕн Тинĕс-Çар Флочĕ пиçĕхсе тĕрекленчĕ, кучухнехи вăрçăн опытне пухрĕ, хамăр Таван çĕршывăн государство интересĕсене хӳтĕлес тĕлĕшпе хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене пурнăçлама пултарнине кăтартса пачĕ.

Отечественнăй вăрçăра пирĕн Флот тунă ăнăçусем пире лăплантармалла мар тата мăнкăмăллантармалла мар. Флот çыннисем, хальхи çитĕнӳсемпе лăпланса ларса, вĕренме тата лайăхланнăсемĕн лайăхланса пыма пăрахсан, пирĕн Флот хальхи вăхăтра хăйĕн умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурнăçлама пултараймĕ.

Пирĕн халăх хăйĕн флочĕшĕн пĕр чарăнмасăр тăрăшать, пире çĕнĕ çар карапĕсем, çĕнĕ вăрçă техникипе хĕçпăлăсем парса тăрать тата малашне те парса тăрĕ.

Пирĕн халăх Тинĕс-Çар Флотне тата ытларах вăйлалатасшăн тата хăватлăрах тăвасшăн.

Аслă çулпуç Сталин ютташ Флота моряксен кадрĕсене пĕр чарăнмасăр вĕрентсе хатĕрлеме тата вĕсене лайăхлатнăçемĕн лайăхлатса пыма хушать. Отечественнăй вăрçăри çапăçусен опытне вĕренсе алла илме, тинĕс çĕлĕвĕпе хăнăхăвне, дисциплинăпа организованноçа тата çӳлерех хăпартма хушать. Хальхи вăхăтра Флотри мĕнпур çынсен задачи Сталин ютташăн çав требованийĕсене çине тăрса пурнăçа кĕртсе пырасси пулать. Çапла туссăн çеç эпир правительствăпа халăх умĕнчи хамăр тивĕçе пурнăçлама пултарăпăр.

Ютташсем—çар морякĕсем!

Хамăр Таван çĕршывăн государство интересĕсене лайăх та таса сыхласа усрăр! Таван çĕршывăн чиккисен леш енче пурăнса, сыхă тăрăр, совет воинĕн чыслăхĕпе тивĕçлĕхне куçа сыхланă пек сыхлăр.

Ютташсем — краснофлотецсем, старшинасем, офицерсем, генералсем тата адмиралсем!

Сире Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа саламлатăп!

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтерсе илнисене сыхласа усранă тата тăшмана çĕнтернĕ паттăр Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флотне мухтăп!

Сывă пултăр пирĕн Совет правительстви!

Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ—пирĕн çĕнтерӳсене хавхалантараканĕ тата организацилекенĕ!

Сывă пултăр Совет халăхĕн çулпуçĕ гениллĕ полководец Совет Союзĕн Генералиссимусĕ аслă Сталин!

СССР Тинĕс-Çар Флочĕн Халăх Комиссарĕ
флот адмиралĕ КУЗНЕЦОВ.

СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн Председатель Заместителĕ Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов патĕнче пулнă йышăну

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов дипломати корпусне йышăннă. Йышăнура ют çĕршывсен посольствисемпе миссийĕсен пуçлăхĕсем тата дипломатиллĕ ответлă сотрудниксем пулнă. çар, тинĕс-çар тата сывлăш-çар атташисем пулнă.

Йышăнура тата çаксем пулнă: СССР Верховный Совет Президиумĕн Пĕрремĕш Заместителĕ Н. М. Шверник, СССР Халăх Комиссарĕсен—флот адмиралĕ Н. Г. Кузнецов, В. А. Малышев, Б. Л. Ванников, Д. Ф. Устинов, И. Т. Тевосян, М. Г. Первухин, И. В. Ковалев тата ытти çынсем те. СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Заместителĕсем—А. Я. Вышинский, В. Г. Деканозов, С. А. Лозовский, М. М. Литвинов, И. М. Майский. Совет Союзĕн Маршалĕсем—А. М. Василевский, С. М. Буденный, артиллери Главнăй Маршалĕ Н. Н. Воронов, авиацин Главнăй Маршалĕ А. А. Новиков, авиацин Маршалĕ С. Ф. Жаворонков, сыхăну çарĕсен Маршалĕ И. Т. Пересыпкин, инженери çарĕсен Маршалĕ М. П. Воробьев, артиллери Маршалĕ Н. Д. Яковлев, адмиралсем — Л. М. Галлер, С. Г. Кучеров. СССР Наука академийĕн Президенчĕ С. И. Вавилов, СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. Ф. Горкин, СССР Наркоминделĕн, Наркомвнешторгăн, Оборона Халăх Комиссариачĕн, Тинĕс-çар Флочĕн Халăх Комиссариачĕн ответлă работникĕсем, çавăн пекех тата ученăйсем, писательсем, артистсем, тата пичечĕпе ют çĕршывсен пичечĕн представителĕсем.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

СТАЛИН ютташа

Хаклă Иосиф Виссарионович!

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа Ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн партипе обществăлла организацисемпе пĕрле пухăнăнă чаплă ларăвĕ Сире Аслă уяв ячĕпе большевикла хĕрӳллĕ салам ярса çирĕп сывлăх сунать.

Пирĕн çĕршывра Совет власĕ пулни 28 çул тултарнине эпир çапăçу хирĕнче тупăсен сасси кĕрлеме чарăннă, гвардеецсен миномечĕсен залпĕсен тĕтĕмĕ сирĕлнĕ, танксемпе самолетсем хăйсен базисене таврăнса лăпланса ларнă тата нумай воинсем мирлĕ ĕçе таврăннă хыççăн уявлатпăр. Хĕрлĕ Çарăн вилемсĕр мухтавпа чапа тухнă боевой ялавĕсем халĕ параннă тăшманăн çĕрĕ çинче вĕлкĕшеççĕ. Çав ялавсене пирĕн мухтавлă воинсем Эсир, хаклă Иосиф Виссарионович, геннилле ертсе пынипе çĕклесе пычĕç. Нимĕçсемпе японецсен чуралăхĕнчен хăтăлса юлнăшăн этемлĕхĕн Сире тав тума тивĕç. Сирĕн геннилĕх паян пирĕн урама килнĕ Аслă уява тума май пачĕ. Телейлĕ Чăваш республикинчи ĕçсыннисем паян Сире питĕ пысăк тав тăваççĕ. Пирĕн нумай ăрусем çав тава асăнĕç, мĕншĕн тесен Отечественнăй аслă вăрçăра эсир ăслăн ертсе пынипе тунă Çĕнтерӳ пире мирлĕ вăхăтри творчествăлла ĕçĕн аслă та çутă çулне çĕнерен уçса пачĕ.

Чăваш республикинчи ĕçсыннисем, аслă вырăс халăхĕ пуçпулса ертсе пыракан пĕтĕм совет халăхĕ пекех, тăшмана çĕнтерес тесе çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлерĕ. Чăваш халăхĕн ывăлĕсем фронтра паттăрла ĕçсен туни, тылра çĕрне-кунне пĕлмесĕр тăрăшса ĕçлени çĕнтерӳ ĕçне эпир хывнă мул пулса тăчĕ.

Халĕ, пирĕн умма çĕнĕ пилĕкçуллăх планĕн аслă пуласлăхĕсем тухса тăнă вăхăтра, эпир çĕнĕ вăй-хăватпа, çĕнĕ çĕкленӳпе ĕçлетпĕр. Çак çĕнĕ пилĕкçуллăх планне пирĕн халăх юратса сталинла таваттăмĕш пилĕкçуллăх тесе ят пачĕ. Эпир совет державин вăрçăпа экономика тĕлĕшĕнчи вăй-хăватне татах та çирĕплесе пырăпăр. СССР Верховный Совечĕн пулас суйлавне хамăрăн юратакан Таван çĕршыв ячĕпе ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунине палăртăпăр.

Аслă Сталин! Эсир пĕр халăх телейĕшĕн кăна пурăнатăр. Октябрьти Социализмлă Аслă Революцие хатĕрленнине тата туса ирттернине, граждан вăрçине, социализм строительствине, юлашкинчен халĕ Отечественнăй вăрçăн йывăр тĕрĕславне,—çак историллĕ тапхăрсене пирĕн çĕршыври ĕçсыннисем Ленинпа Сталинăн вилемсĕр идейисем пире çул кăтартса пынине, хавхалантарнине, çĕнтерӳ туса ăна çирĕплетсе хăварма вĕрентнине пула пурăнса ирттерчĕç. Çавăн пирки те ĕнтĕ паян уяв ячĕпе пирĕн Сталин патне—çулпуçĕне тусăмăр, аттене учителемĕр патне çав тери нумай саламсем пыраççĕ.

Çав саламсен хăваслă шавĕнче пирĕн юррамăр та—орденлă Чăваш республикинчи телейлĕ халăхăн юрри янăратăр.

Хамăрăн Таван çĕршывăн хăваслăхĕшĕн, унăн тăшманĕсене хăратса нумай татах та нумай çулсем пурăнăр, хаклă Иосиф Виссарионович!

Сывă пултăр Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни!

Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ—пирĕн Таван çĕршыври халăхсен телейĕпе мухтавлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ!

Сывă пултăр Сталинла Конституци — социализмлă обществăн Конституцийĕ!

Сывă пултăр Совет халăхĕн çулпуçĕ—Аслă Сталин!

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа Шупашкар хулинче пулса иртнĕ чаплă ларăу

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Шупашкарта, Чăвашсен Государство Академи театрĕнче, Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совечĕн партипе общество организацийĕсемпе пĕрле тунă чаплă ларăвĕ пулса иртнĕ.

Ларăва ĕçсынни депутачĕсен Шупашкар хула Совет Исполкомĕн председателĕ Аникин ютташ уçнă.

Чаплă лару президиумне ВКП(б) Чăваш Обкомĕн тата Шупашкар горкомĕн секретарьне И. М. Чарыков ютташа, Чăваш АССР Совнаркомĕн председательне А. М. Матвеев ютташа, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн председательне З. А. Андреева ютташа, ВКП(б) Центральный Комитечĕ çумĕнчи парти Контроль Комиссийĕн Чăваш АССР-ĕнчи Уполномоченнăйне И. М. Логвин ютташа тата ытти çынсене те суйланă.

Тăвăллăн аслă çупса, хисеплĕ президиума Сталин ютташ ертсе пыракан ВКП(б) Центральный Комитечĕн Политбюро составне суйланă.

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен ВКП(б) Чăваш Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ А. С. Вишняков ютташ докклад туса панă.

Чаплă ларура пулнисем пысăк сĕкленӳпе аслă Сталин патне саламла çыру яма йышăннă.

Ĕçсынни депутачĕсен Мускав Совечĕн Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа ирттернĕ чаплă ларăвĕ

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Кремльти дворецăн Пысăк заленче Ĕçсынни депутачĕсен Мускав Совечĕ партипе общество организацийĕсен тата Хĕрлĕ Çăран представителĕсемпе пĕрле Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа чаплă лару туса ирттернĕ.

Унта пирĕн халăхăн чи лайăх представителĕсем—Социализмлă Ес Геройĕсем, Совет Союзĕн Геройĕсем, генералсемпе офицерсем, наукăпа искусствăн çав тери паллă деятелĕсем, Мускаври предприятисенчи стахановецсем пухăннă. Пушмайăпĕн кăкăрĕсем çинче «1941—1945 çулхи Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче хастарлăн ĕçленĕшĕн» ятлă медальсем тăрать, çав медальсене тылри ĕçсыннисене Октябрь кунĕ умĕн пана.

19 сехет. Залра кĕске вăхăтлăхă шăп пулса тăрать. Президиум сĕтелĕ патне Молотов, Андреев, Каганович, Микоян, Берия, Шверник, Маленков, Вознесенский ютташсем тухса тăраççĕ. Ложăсене ВКП(б) Центральный Комитечĕн членĕсем, СССР Верховный Совет Президиумĕн членĕсем, Халăх Комиссарĕсем пырса ларраççĕ. Залра çынсем пурте партипе правительство руководителĕсене хисеплесе тăвăллăн алă çупаççĕ.

Сталин ютташ ячĕпе паланă саламлă сăмахсем илтĕнеççĕ. Мускав Совечĕн депутачĕсем, генералсемпе офицерсем, ученăйсемпе рабочисем, инженерсем тата искусство мастерĕсем—пурте тăван Сталина

1945 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче Хĕрлĕ площадьре уяв ячĕпе пулнă парад

(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра).

тăшмана татăклăнах çĕнтерчĕç. Вăрçăран пирĕн çĕршыв татах та ытларах вăйланса, хăватлăланса тухрĕ.

Совет государствин çĕнтерĕвĕ Октябрьти революци туса хунă социализмлă стройăн вăй-хăвачĕн результачĕ, большевиксен партийĕ организациленин тата хавхалантарнин результачĕ, Совет правительстви тата пирĕн аслă çулпуç генийлĕ полководец Сталин юлташ тĕрĕс те ăслă ертсе пынин результачĕ пулса тăрать.

Пирĕн Тăван çĕршывра мирлĕ аталану тапхăрĕ пуçланчĕ. Совет çыннисем нимĕç вăрă-хурахĕсем аркатса хăварнă халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратаççĕ, хуласемпе ялсене çĕнерен тăва-тăва лартаççĕ, çĕнĕ фабрикăсемпе заводсем тăваççĕ, колхоз уйхирĕнче тырпул тухăçлăхне ӳстереççĕ. Мухтавлă çĕнтерӳçĕ-воинсем мирлĕ ĕç тума таврăнаççĕ.

Вăрçă вăхăтĕнче фронтра паттăрлăх, тылри ĕçре мухтавлăх кăтартнă совет халăхĕ мирлĕ аталану вăхăтĕнче хăйĕн çĕнтерĕвĕсене йышлалантарас тесе, хамăран çĕршыва экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен малалла чечеклентерсе пырас тесе, вăя шеллемесĕр ĕçлĕ.

Ялташсем! Пирĕн çĕнтерӳсем пысăк. Анчах пирĕн, совет çыннисен, Хĕрлĕ Çар воинĕсен, Ленинпа Сталин воспитани парса çитĕнтернĕскерсен, капăланма юрамасть. Хĕрлĕ Çăран тунă çĕнтерӳсемпе лăпланса лармалла мар, хамăран Тăван çĕршыва тивĕçлĕ пулас тесе, унăн малалла ĕçренсе лайăхланса пымалла.

Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче пирĕн çар науки пиллĕ пысăк опыт пухрĕ. Хĕрлĕ Çăран генералĕсемпе офицерĕсен тивĕçлĕ çав опыта ĕренсе алла илесси, хăйсен пĕлĕвĕсене пуянлатасси, советăн çар искусствине аталантарса малаллă илсе пырасси пулать.

Отечественнăй аслă вăрçăра Хĕрлĕ Çар боецĕсем хăйсен хĕçпăшалне мухтава кăларчĕç. Вăрçăра вĕсем паттăрлăх, хăйсен тивĕçне лайăх ăнланса илнине кăтартса пачĕç. Пирĕн боецсен, вĕсем кирек ăçта пулсан та—хамăран Тăван çĕршывра, е унăн тулашĕнче пулсан та, хăйсен ĕçне тихлĕн туса пымалла, социализм çĕршывĕн воинĕн чыслăхĕпе тивĕçлĕхне çӳлте тытса тăмалла.

Ялташсем! Совет государствин харушсăрлăхĕшĕн тăрăшасси пирĕншĕн чи пысăк тивĕç пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар маларах ертсе пырать. Унпа юнашар—артиллери генерал-лейтенанчĕ Благоправов, паллă ученăй тата çар педагогĕ, академик. наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла преми лауреачĕ пырать. Вăтăр çул хушши вăл пирĕн тăван артиллерие аталантарас тĕлĕшпе ĕçленĕ, офицерсене вĕрентсе хатĕрленĕ. Вăл вĕрентсе хатĕрленĕ офицерсем совет артиллерийĕ вăрçă турри пулнине çапăçу хирĕсенче пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç.

Хĕрлĕ Çăран тĕрлĕ чăсĕсенчи офицерсем Мавзолей трибуни умĕнчен йĕркеллĕн иртсе пыраççĕ, вĕсене алă çупса кăмăллăн кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ Çăран Куйбышев ячĕпе тăракан Çарпа инженерин Хĕрлĕ Ялавлă Çар Академийĕн, Хĕрлĕ Çăран Ворошилов ячĕпе тăракан Химисхлăхĕн Çар Академийĕн, Хĕрлĕ Çăран Çарпа ветеринари Академийĕн, Сывлăшран тапăннинне хирĕç кĕрешекен çăран аслă шкулĕн, Ют чĕлхесене вĕрентекен çар институчĕн колоннисем иртсе пыраççĕ...

Хĕрлĕ Ялав орденлĕ тата пĕрремĕш степень Суворов орденлĕ иккĕмĕш гвардейски Таманьски стрелковăй дивизин боецĕсем площаде пырса кĕреççĕ. Çак дивизи вăрçăн малтанхи уйăхĕнчех фронта пырса кĕрсе, нимĕçсене Ельня патĕнче аркатнă, унтан Курск, Глухов, Ростов патĕнче, Таманьпе Крымра, Литвапа Латвире çапăçнă. Ку дивизи фашистла тискер кайăкăн йăвине — Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕнĕ Хĕрлĕ Çăран малта пыракан часĕсен шутĕнче пулнă.

Мускав çыннисем хăйсен боевой ялавĕсене пур çапăçусем витĕр те илсе тухнă мухтавлă герой-гвардеецсене хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Утлă çар часĕсем эскадрон хыççăн эскадрон иртсе пыраççĕ. Малти эскадрон пуçĕнче кĕмĕл тĕслĕ ут çинче Васильев полковник, мухтавлă кавалерист, красноармеецран пуçласа полк командирне çити вăрăм çула утса тухнăскер, пырать. Унăн йăлтăртатакан хĕçĕ салют панă май тăп тăрать. Хĕрлĕ площадь çинче шăнтарса тăраççĕ. Пиншер плакатсем çине ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисене çырса хунă: «Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтерсе илнисене хӳтĕлесе хăварнă тата тăпмана çĕнтернĕ паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!»

Мавзолей патне электричество ламписем тăвакан заводри рабочисемпе служащисен колонни çывхарса килет. Çав завода лайăх ĕçленешĕн Ленин орденĕ парса наградалана. Çав заводри çĕршер рабочипе работницăсене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградалана. Заводри рабочисем мирлĕ продукци туса кăларас, тĕлĕшпе тунă малтанхи çитĕнӳсем çинчен Тăван çĕршыва рапорт параççĕ. 1946 çулта электричество ламписемпе радио ламписем туса кăларасси икĕ хут ӳсет.

Хĕрлĕ площаде Наукăсен академийĕн, унăн наукăлла учрежденийĕсен тата столицăри аслă шкулсен колоннисем пырса кĕнине трибунăсем çинчи çынсем ăшшăн саламлаççĕ. Малта пыракан совет науки ячĕпе саламлă самахсем калани илтĕнет. Колоннăн ялавĕсемпе транспорантĕсем çинче—гитлерла Германине империализмла Японие аркатса тăкас ĕçе совет ученăйĕсем мĕн тери пысăк вăй хунине кăтартакан цифрăсем. Демонстраци тăваканнисем хушшинче пулкан ватă деятелĕсем, пултарулла та чапла ученăйсем пур. Вĕсен ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче пĕлсе тарать. Вĕсемпе пĕрлех совет наукин çамрăк представителĕсем — Совета аслă шкулĕнче вĕренекен студентсем пыраççĕ. Вĕсем паян хăйсен мĕнпур вăйне, пĕлĕвĕне талантне халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма хатĕрленĕ, сталинла тăвăтăрăш политикăн аслă задачисене ăнăçлăн татса парма хатĕрленĕ кăтартса пачĕ (ТАСС).

Таганка районĕнчи ĕçсыннисен колонни уйрăмах илемлĕн куранать. 1-мĕш подшипник заводĕнчи рабочисем Совет Союзĕн Генералиссимусĕн Сталин юлташăн, Совет Союзĕн Маршалĕсемпе Геройĕсен тата Социализмлă Ĕç Геройĕсен сăнĕсене йăтса пыраççĕ. Вăрçă вăхăтĕнче çак завод коллективĕ самолетсем, танксем, автомобильсем валли 16 миллион ытла подшипник туса панă, çĕршер миллион тенкĕлĕх хĕçпăшалпа боеприпас туса кăларнă. Колонна пуçĕнче заводăн тава тивĕçлĕ çыннисем пыраççĕ. Вĕсенчен нумайĕшĕн кăкăрĕсем çинче Совет Союзĕн орденĕсемпе юнашар «1941—1945 çулсенчи Отечественнăй вăрçăра хастарлă ĕçленĕшĕн» медальсем йăлтăртатса пыраççĕ.

Пролетарски районри ĕçсыннисем Хĕрлĕ площаде пырса кĕнине саламлăн шавласа кĕтсе илеççĕ. Сталин ячĕпе тăракан автозаводăн колонни пуçĕнче Оборонăн Государственный Комитечĕн ялавĕ мухтавлăн вĕлкĕпшсе пырать. Ку заводри ĕçсыннисен колоннинче тимĕрçсем, мотор цехĕнчи рабочисем, автомашинăсем пухакан рабочисем пыраççĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче автозаводăн главнăй конвейере çинчен шанчăклă ЗИС-сем туха фронта кайса тăчĕç. Халĕ автозавод коллективĕ халăх хуçалăхĕнче кирлĕ çĕнĕ йышши машинăсем туса кăларма хатĕрленет.

* * *

Столицăри ĕçсыннисен уяв ячĕпе пулнă демонстрацийĕ виçĕ сехете пычĕ. Демонстрацине 1,5 миллион çын ытла хутшăннă. Вăл пирĕн халăх Ленин—Сталин партийĕ тавра пĕтĕçнине кăтартса пачĕ. Вăл совет халăхăн хĕрӳллĕ патриотизмне, вăрçа хыçăн пирĕн государство умне туха тăна ăслă задачисене ĕçлеми-хĕçпăшăла пахă хатĕрленине кăтартса пачĕ (ТАСС).

* * *

Антонов юлташ хăйĕн сăмахне каласа пĕтерчĕ. Артиллери салютĕн залпĕсем кĕрлеççĕ. Совет Союзĕн Государство гимнĕн мухтавлă кĕвви янăрать. Пиншер çын «урра» кăшкăрни площадьре пĕр хĕрринчен тепĕр хĕррине çити мухтавлăн кĕрлесе тăрать. Ĕмĕр манăçа тухми мухтавлă симфони!

...Çар часĕсем парада хатĕрленсе тăнă. Команда илтĕнет:

— Парад, смирно! Мухтавлă марша пуçлăр!

Барабан тăнкăртатăвĕпе площаде Оборона Наркомачĕн офицерсен пĕрлештернĕ полкĕ пырса кĕрет. Вăл ĕнтĕ Мускав гарнизонĕн часĕсен маршне пуçласа ярать. Пĕрлештернĕ полкăн командирĕ Тарасов генерал-лейтенант партине правительствăн руководителĕсене, Хĕрлĕ Çăран мухтавлă полководецĕсене салют парса хĕçне çĕклет. Мавзолей умĕнчен пехота офицерĕсем, артиллеристсем, танкистсем, инженерсем, связистсем йĕркеллĕн иртсе пыраççĕ. Пирĕн Отечественнăй аслă вăрçăн хаяр кĕрешĕвĕн вутхĕмĕнче ӳссе çирĕпленнĕ мухтавлă офицерсем иртсе пыраççĕ.

Хĕрлĕ Çăран офицерĕсене вĕрентсе хатĕрлекен Ленин орденлĕ тата пĕрремĕш степень Суворов орденлĕ Хĕрлĕ Ялавлă М. В. Фрунзе ячĕпе тăракан Çар Академийĕн воспитанникĕсем площаде пырса кĕнине трибунăсем çинчи çынсем хапăл туса кĕтсе илеççĕ. Ку колоннăн пуçĕнче опытлă çар начальникĕсенчен пĕри—Совет Союзĕн Геройĕ Чибисов генерал-полковник пырать. Виçĕ хут Совет Союзĕн Геройĕ мухтавлă летчик Александр Покрышкин, халĕ Академире вĕренекенскер, Академин виçĕ орденлă ялавне çĕклесе пырать. Унпа юнашар унăн ассистенчĕсем икшер хут Совет Союзĕн Геройĕсем Лавриненков подполковник тата гвардиле майорĕ Алелюхин пыраççĕ.

Площаде Хĕрлĕ Çăран Дзержинский ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ Артиллери Академийĕн колонни пырса кĕрет. Артиллерист-офицерсене Академи начальникĕ артиллери генерал-полковникĕ Хохлов ертсе пырать. Унпа юнашар—артиллери генерал-лейтенанчĕ Благоправов, паллă ученăй тата çар педагогĕ, академик. наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Сталинла преми лауреачĕ пырать. Вăтăр çул хушши вăл пирĕн тăван артиллерие аталантарас тĕлĕшпе ĕçленĕ, офицерсене вĕрентсе хатĕрленĕ. Вăл вĕрентсе хатĕрленĕ офицерсем совет артиллерийĕ вăрçă турри пулнине çапăçу хирĕсенче пĕтĕм тĕнчене кăтартса пачĕç.

Хĕрлĕ Çăран тĕрлĕ чăсĕсенчи офицерсем Мавзолей трибуни умĕнчен йĕркеллĕн иртсе пыраççĕ, вĕсене алă çупса кăмăллăн кĕтсе илеççĕ. Хĕрлĕ Çăран Куйбышев ячĕпе тăракан Çарпа инженерин Хĕрлĕ Ялавлă Çар Академийĕн, Хĕрлĕ Çăран Ворошилов ячĕпе тăракан Химисхлăхĕн Çар Академийĕн, Хĕрлĕ Çăран Çарпа ветеринари Академийĕн, Сывлăшран тапăннинне хирĕç кĕрешекен çăран аслă шкулĕн, Ют чĕлхесене вĕрентекен çар институчĕн колоннисем иртсе пыраççĕ...

Хĕрлĕ Ялав орденлĕ тата пĕрремĕш степень Суворов орденлĕ иккĕмĕш гвардейски Таманьски стрелковăй дивизин боецĕсем площаде пырса кĕреççĕ. Çак дивизи вăрçăн малтанхи уйăхĕнчех фронта пырса кĕрсе, нимĕçсене Ельня патĕнче аркатнă, унтан Курск, Глухов, Ростов патĕнче, Таманьпе Крымра, Литвапа Латвире çапăçнă. Ку дивизи фашистла тискер кайăкăн йăвине — Хĕвелтухăç Пруссие пырса кĕнĕ Хĕрлĕ Çăран малта пыракан часĕсен шутĕнче пулнă.

Мускав çыннисем хăйсен боевой ялавĕсене пур çапăçусем витĕр те илсе тухнă мухтавлă герой-гвардеецсене хĕрӳллĕн саламлаççĕ.

Утлă çар часĕсем эскадрон хыççăн эскадрон иртсе пыраççĕ. Малти эскадрон пуçĕнче кĕмĕл тĕслĕ ут çинче Васильев полковник, мухтавлă кавалерист, красноармеецран пуçласа полк командирне çити вăрăм çула утса тухнăскер, пырать. Унăн йăлтăртатакан хĕçĕ салют панă май тăп тăрать. Хĕрлĕ площадь çинче шăнтарса тăраççĕ. Пиншер плакатсем çине ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисене çырса хунă: «Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтерсе илнисене хӳтĕлесе хăварнă тата тăпмана çĕнтернĕ паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!»

Мавзолей патне электричество ламписем тăвакан заводри рабочисемпе служащисен колонни çывхарса килет. Çав завода лайăх ĕçленешĕн Ленин орденĕ парса наградалана. Çав заводри çĕршер рабочипе работницăсене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградалана. Заводри рабочисем мирлĕ продукци туса кăларас, тĕлĕшпе тунă малтанхи çитĕнӳсем çинчен Тăван çĕршыва рапорт параççĕ. 1946 çулта электричество ламписемпе радио ламписем туса кăларасси икĕ хут ӳсет.

Хĕрлĕ площаде Наукăсен академийĕн, унăн наукăлла учрежденийĕсен тата столицăри аслă шкулсен колоннисем пырса кĕнине трибунăсем çинчи çынсем ăшшăн саламлаççĕ. Малта пыракан совет науки ячĕпе саламлă самахсем калани илтĕнет. Колоннăн ялавĕсемпе транспорантĕсем çинче—гитлерла Германине империализмла Японие аркатса тăкас ĕçе совет ученăйĕсем мĕн тери пысăк вăй хунине кăтартакан цифрăсем. Демонстраци тăваканнисем хушшинче пулкан ватă деятелĕсем, пултарулла та чапла ученăйсем пур. Вĕсен ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче пĕлсе тарать. Вĕсемпе пĕрлех совет наукин çамрăк представителĕсем — Совета аслă шкулĕнче вĕренекен студентсем пыраççĕ. Вĕсем паян хăйсен мĕнпур вăйне, пĕлĕвĕне талантне халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма хатĕрленĕ, сталинла тăвăтăрăш политикăн аслă задачисене ăнăçлăн татса парма хатĕрленĕ кăтартса пачĕ (ТАСС).

1945 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче пулнă Мускаври ĕçсыннисен демонстрацийĕ

Пирĕн Тăван çĕршывăн столици халăхăн аслă та мухтавлă уявĕсене нумай курнă. Кăçалхи Октябрь уявĕ ячĕпе пулнă демонстраци—вăрçă хыççăнхи пĕрремĕш демонстраци—çак куп историллĕ Хĕрлĕ площадьре пулнă кашни çыннăн ĕмĕр манăçа тухми демонстрацийĕ пулса тăрать.

Çакă вăл хăйĕн мухтавлăхĕпе илемлĕхĕ тĕлĕшĕнчен ĕмĕр манăçа тухми уяв пулса тăчĕ. Хĕрлĕ площаде пĕр вăхăтрах темиçе район пырса тухрĕ. Çил çĕршер ялава вĕлкĕштерсе пĕтĕм площаде хĕрлĕ сăн парать.

Демонстраци тăвакан халăхăн колоннисем Мавзолей умĕне иртсе пыраççĕ. Вĕсем партипе правительство руководителĕсене пĕтĕм чун-чĕререн саламласа сывлăх сунаççĕ. Молотов юлташ саламласа алă çулать. Демонстраци тăваканнисем хушшинчен «урра» кăшкăрнисем, «Сывă пултăр Сталин юлташ!», «Сывă пултăр Молотов юлташ!» тесе кăшкăрнисем илтĕнеççĕ. Çак хаваслă самантра кашни сын аслă çулпуçĕ, учитель тата полководец çинчен—тăван Сталин çинчен шухăшлать. Вăл пирĕн çарпа халăха аслă çĕнтерӳ патне ертсе пычĕ.

Демонстраци тăваканнисем Сталин юлташăн, Политбюро членĕсен, Совет Союзĕн Маршалĕсемпе Геройĕсен, Социализмла Ĕç Геройĕсен сăнĕсене йăтса пыраççĕ. Колоннăсем сийĕнче Мускав ĕçсыннийĕсен вăрçă вăхăтĕнче тата вăрçă хыççăнхи мирле пурнăç вăхăтĕнче ĕçре тунă çитĕнӳсене кăтартакан ӳкерчĕксемпе диаграммăсем çеклесе пыраççĕ. Кашни макетпа паянхи çинче ĕç тухăçлăхĕ ӳснине, ытларах продукци туса кăларнине кăтартакан цифрасемпе пирĕн государствăн пайăк çĕнтерĕмĕ вăй-хăватне сăнласа панă. Çав цифрăсем — вăхăтри социализм строительствин çĕнĕ задачисене ăнăçлăн татса парасси шантарса тăраççĕ. Пиншер плакатсем çине ВКП(б) Центральный Комитечĕ чĕнсе каланисене çырса хунă: «Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтерсе илнисене хӳтĕлесе хăварнă тата тăпмана çĕнтернĕ паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!»

Мавзолей патне электричество ламписем тăвакан заводри рабочисемпе служащисен колонни çывхарса килет. Çав завода лайăх ĕçленешĕн Ленин орденĕ парса наградалана. Çав заводри çĕршер рабочипе работницăсене Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградалана. Заводри рабочисем мирлĕ продукци туса кăларас, тĕлĕшпе тунă малтанхи çитĕнӳсем çинчен Тăван çĕршыва рапорт параççĕ. 1946 çулта электричество ламписемпе радио ламписем туса кăларасси икĕ хут ӳсет.

Хĕрлĕ площаде Наукăсен академийĕн, унăн наукăлла учрежденийĕсен тата столицăри аслă шкулсен колоннисем пырса кĕнине трибунăсем çинчи çынсем ăшшăн саламлаççĕ. Малта пыракан совет науки ячĕпе саламлă самахсем калани илтĕнет. Колоннăн ялавĕсемпе транспорантĕсем çинче—гитлерла Германине империализмла Японие аркатса тăкас ĕçе совет ученăйĕсем мĕн тери пысăк вăй хунине кăтартакан цифрăсем. Демонстраци тăваканнисем хушшинче пулкан ватă деятелĕсем, пултарулла та чапла ученăйсем пур. Вĕсен ĕçĕсене пĕтĕм тĕнче пĕлсе тарать. Вĕсемпе пĕрлех совет наукин çамрăк представителĕсем — Совета аслă шкулĕнче вĕренекен студентсем пыраççĕ. Вĕсем паян хăйсен мĕнпур вăйне, пĕлĕвĕне талантне халăх хуçалăхне юсаса ура çине тăратма хатĕрленĕ, сталинла тăвăтăрăш политикăн аслă задачисене ăнăçлăн татса парма хатĕрленĕ кăтартса пачĕ (ТАСС).

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа ют çĕршывсенче пулса иртнĕ ларусем, демонстрацисемпе митингсем

ПАРИЖ, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, «Франци—СССР» ятлă общество ноябрĕн 7-мĕшĕнче Шайо дворецĕнче вечер туса ирттернĕ. Вечерта Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо тата Совет Союзĕн Франции посолĕ А. Е. Богомолов председатель пулнă. Залра халăх тупа-тулли пулнă. Унта Франци тата союзлă çĕршывсен общество тата политика деятелĕсем нумай пулнă. Бидо тата Богомолов сăмахсем тухса каланă.

ВЕНА, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Совет Союзĕпе культурăпа экономика енчен çыхăнса тăракан общество Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа чаплă каç туса ирттернĕ. Музыкантсен пĕрлешĕвĕн çуртĕнчи çав тери пысăк залра халăх туп-тулли пулнă. Мĕн пурĕ 2.000 çынна яхăн пулнă. Австрири политика тата общество деятелĕсем, культурăпа искусство работникĕсем, писательсем, журналистсем йышлăн пухăнна. Чаплă ларăва государство канцлерĕ Карл Реннер доктор, вице-канцлерсем Фигль тата Коплейниг, министрсем тата Вена хулин бургомистрĕ пынă. Америка, Англи, Франци командованийĕсен представителĕсем пулнă. Совет Союзĕ енчен çаксем пулнă: Совет Союзĕн Маршалĕ Конев, генерал-полковник Желтов, политика советчикĕ Киселев тата ытти сем те.

Пухура государство канцлерĕ Реннер доктор сăмах тухса каланă. Вăл Совет Союзĕн государство праçникĕ ячĕпе пухнă чаплă пухура пулнă пирки савăнни çинчен каласа кăтартнă.

Унтан Конев Маршал сăмах тухса каланă. Вăл Австрин государство канцлерне Совет Союзĕ çинчен çаван пек ăшшăн каланăшăн тав тунă. Совет Союзĕпе культурăпа экономика енчен çыхăнса тăракан обществăна пĕтĕм Австри халăхĕ тата Австри государствине ертсе пыракан çынсем пулăшса пырассине шанса тăни çинчен каланă.

БУДАПЕШТ, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Венгерсен Совет Союзĕпе культура енчен çыхăнса тăракан общество ноябрĕн 6-мĕшĕнче Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа чаплă каç туса ирттернĕ. Пухура Союзниксен Венгрири Контроль Комиссийĕн председателĕ Совет Союзĕн Маршалĕ К. Е. Ворошилов, Совет Союзĕн Венгрири посланникĕ Г. М. Пушкин, Хĕрлĕ Çар командованийĕн представителĕсем пулнă, çавăн пекех тата Венгрин премьер-министрĕ Миклош Бела, Венгри правительствин ытти членĕсем, Венгрин Вăтăлăх нации пухăвĕн председателĕ Жеди Бела, демократиллĕ партисен руководителĕсем Венгри общественноçĕн представителĕсем пулнă.

Пухура венгерсен Совет Союзĕпе культура енчен çыхăнса тăракан обществин хисеплĕ президенчĕ Сент Дьерди профессор тата премьер-министр Миклош Бела салам каланă. Çав обществăн генеральнăй секретарĕ Хай Дьюла Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен доклад тунă. Унтан чаплă ларăва пухăннă халăх, çав тери хавасланса; Сталин Генералиссимусăмуса тата Совет Союзĕн Маршалĕсене Ворошиловпа Конева ямалли саламлă телеграммăсене йышăннă.

ЧУНЦИН, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Чунцин хулинчи радио пĕлтернĕ тăрăх, китаецсен Совет Союзĕпе культура енчен çыхăнса тăракан обществи Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнă ятпа пичет представителĕсĕр йышăннă. Йышăнура 400 çын ытла пулнă, вăл шутра Китайăн законсем кăларакан Юанĕн (Китай палатин) председателĕ Сунь Фо доктор пулнă. Вăл сăмах калланă. Китайпа Совет Союзĕ хушшинчи туслăха çирĕплетме кирлине палăртнă.

СИДНЕЙ, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 7-мĕшĕ ĕçлемелли кун пулнă пирки, Австралири обществăллă организацисем Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарнине ноябрĕн 4-мĕшĕнче, вырсарникун уявласа иртернĕ.

Сиднейри профсоюзсемпе рабочисен организацийĕсем пысăк демонстраци тунă. Демонстрацире çынсем Пĕрлешнĕ нацисен ялавĕсене, плакатсем, И. В. Сталин портречĕсене тата Пĕрлешнĕ нацисен ытти лидерĕсен портречĕсене йăтса пынă. Плакатсем çине çакăн пек лозунгсем, çырса хунă: «Сывă пултăр СССР!», «Австралири рабочисем Совет Союзне саламлаççĕ!», «Совет халăхĕпе таччăнрах сыхăнар!», «Хĕрлĕ Çар—ирĕке кăларакан çар!», «Мирпе хăрушсăрлăх тĕнче пĕрлĕхлĕ пулнинчен килет!», «Совет Союзĕ—прĕклĕхпе демократин хăватлă кренноçĕ!» тата Совет Союзĕпе совет халăхне саламлакан ытти лозунгсем те нумай çырнă. Демонстраци хыççăн митинг пулса иртнĕ. Митингра 5.000 çын ытла пулнă. Унта профсоюз деятелĕсем, çар представителĕсем тата обществăллă нумай организацисен представителĕсем сăмахсем тухса каланă.

Çĕнĕ Кăнтăр Уэльсăн Рабочи советĕ çапла чĕнсе каланă: «Рабочи совет халăха вырăссен нации кунĕ 28 çул тултарнине уявланă сĕре хутшăнма чĕнет. Фашистла Германипе Япони çĕнтерес ĕçрĕ Пĕрлешнĕ нацисем Совет Союзĕ мĕн тери пысăк вырăн йышăннинĕ эпир лайăх пĕлетпĕр. Октябрьти революци 28 çул тултарнине уявланă сĕре хутшăнни эпир фашизма хирĕç пĕрлешнине пĕлтерĕ». Мельбурн хулинче демонстрацине митинга «Вырăсен нации кунне иттермелли комитет» организациленĕ. Англикан чиркĕвĕн священникĕ Лангли çав комитетăн председателĕ пулнă. Вăл комитетăн ĕçне обществăллă тĕрлĕ организацисен нумай представителĕсем хутшăннă.

Пур радиостанцисем те çав кун çинчен уйрăм передача панă.

Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче В. М. Молотов тунă доклад çинчен ют çĕршывсенче мĕн сыраççĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ноябрĕн 6-мĕшĕнче Англири радио Мускав Совечĕн савăнăçлă чаплă ларăвĕнче В. М. Молотов Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни çинчен тунă доклада темиçе чĕлхепе панă.

Рейтер агентствин дипломати обозревателĕ ноябрĕн 6-мĕшĕнче çав доклада радио тăрăх ăнлантарса панă. Вăл çапла каланă: Лондонри лайăх пĕлсе тăракан çынсем В. М. Молотов доклачĕ пирки çапла шутлаççĕ: Совет Союзĕ дипломатиллĕ мĕнпур ыйтусем тĕлĕшпе те хăйĕн шухăшне малтанхи пекех ним улăштармасăр тытса пырать. Халĕ ĕнтĕ çакă палла: иртнĕ эрне вĕçĕнче Вашингтонран шантаракан хыпарсем килчĕç пулин те, Инçетри Хĕвелтухăçĕнче союзниксем пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлес ыйтăва татса пани çук-ха.

Малалла политика обозревателĕ çапла каланă: Лондонра пурте çакăн пек шутлаççĕ: Совет правительстви, малтанхи пекех, тĕнчери государствăсемпе килĕштерсе ĕçлесе тăрасшăн, анчах та вăл хăйĕн условийĕсене улăштарма шутламасть.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче Англи хаçачĕсем Молотов доклачĕ çинчен статьясем çырса кăларнă. «Дейли телеграф энд Морнинг пост» тата «Дейли геральд» хаçатсем В. М. Молотов çаван пек тухса калани не ырласа çыраççĕ. «Дейли телеграф» çапла çырать: Молотов доклачĕ виçĕ аслă держава хушшинчи çыхăну лайăхланса пырассине шанма май парать, мĕншĕн тесен Молотов тĕнчери хăрушсăрлăх пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçленинчен килет, тесе каланă.

Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ Молотов «пирĕн атом энергийĕ те тата ытти çитĕнӳсем пулĕç» тени—атом бомби çинчен халĕ сĕнĕрен пĕтĕм тĕнчипе сӳтсе-явма пуçланине пĕлтерет. Молотов сăмахне тĕнчери пур тĕп столицăсенче те вĕренĕç. Англи хаçачĕсенче пуринче те Молотов докладне пĕрремĕш страницăра чи курăнмалли вырăнта пичетлесе кăларнă.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер Америкăри радиостанцисем юлашки хыпарсем пĕлтернĕ чухне В. М. Молотовăн Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклачĕ çинчен нумай калаçнă.

Радиокомментатор Хау В. М. Молотов доклачĕ çинчен тĕплĕн каласа панă. В. М. Молотов доклачĕ çакна кăтартать, — тенĕ Хау: — Совет Союзĕн Пĕрлешнĕ ытти нацисемпе килĕштерсе ĕçлесшĕн, вăл «пысăк тройкăри» державăсем пĕрлĕхлĕ пулассине шанать. Хау малалла çапла калаçнă: Совет Союзĕпе хĕвеланăçĕнчи демократисем хушшинчи çыхăнусене ĕлĕкрен пыракан пĕр япала — пĕр-пĕрин пирки иккĕленни—канçĕрлесе тăрать. Пĕрлешӳллĕ Штатсен Совет Союзĕн шухăшне пĕтĕмпех йышăнмалла мар, анчах та вĕсен çав шухăша ăнланма кирлĕ.

Ноябрĕн 6-мĕшĕнче тухнă каçхи хаçатсен юлашки кăларăмĕсенче В. М. Молотов доклачĕ çинчен нумай сырнă.

МЕКСИКО, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Ĕнер каçхи хаçатсем пурте В. М. Молотовăн Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă докладĕнчен хăшпĕр выраннсене илсе, пĕрремĕш страницăра пысăк заголовоксемпе пичетлесе кăларнă.

ПРИСТЛИ ХАЙ СОВЕТ СОЮЗĔНЧЕ ПУЛНИ ÇИНЧЕН МĔН КАЛАТЬ

КОПЕНГАГЕН, ноябрĕн 6-мĕшĕ. (ТАСС). Çак кунсенче Осло хулинчен Копенгагена Англи писателĕ Пристли пынă. Хаçат представителĕсене вăл хăй Совет Союзне кайса килни çинчен каласа панă. Пристли Совет Союзенче ишĕлнĕ предприятисемпе ытти япаласене юсаса хута ярас ĕç хăвăрт пынине палăртнă тата совет литературипе искусствин çитĕнĕвĕсем çинчен питĕ ăшшăн каласа панă. Пристли çапла калаçнă: «Российăри çамрăксем пуласлăх çине шанса пăхаççĕ», тенĕ.

Совет театрĕ çинчен вăл çапла каланă: ман шутпа, «вырăс театрĕ тĕнчери театрсенчен чи лайăххи», тенĕ.

МАКАРТУР ЯПОНИН ПЫСĂК КОМПАНИЙĔСЕНЕ ХУПМА ХУШНĂ

ЧЫО-ГОРК, ноябрĕн 8-мĕшĕ (ТАСС) Ассошиэйтед Пресс агентствин Токиори корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Макартур Япони правительствине Мицуи, Мицубиси, Ясуда тата Сумитомăн компанийĕсене тата монополиллĕ ытти компанисене те хупма хушнă.

Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен Лондонри конференцийĕ

ЛОНДОН, ноябрĕн 7-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕн ноябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи ларăвĕнче Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн уставĕн проектне сӳтсе-явнă. Тухса калана çынсем пурте çав устав проекчĕне килĕшни çинчен калана тата пĕтĕм тĕнчери çамрăксен вăйла та анлă демократиллĕ организацийне тума кирлине палăртнă.

Ноябрĕн 7-мĕшĕнче конференци Грецири çамрăксен делегацине итленĕ. Ăна тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Яннакопулос çамрăка саламласа, делегатсем пурте ура çине тăнă. Яннакопулос вăл Грецине ташман оккупацинелĕ вăхăтра çамрăксен партизанла отрячĕсене организациленĕ тата ЭАМ командованийĕнче çамрăксен представителĕ пулса ĕçленĕ. Вăл пĕтĕм тĕнчери федерацин уставне кăларнă, çав федерацин пĕтĕм тĕнчери ытти организацисемпе, чи малтан Пĕрлешнĕ нацисен организацийĕпе, таччăн çыхăнма, тенĕ.

Конференцин ларăвĕ хупăннă хыççăн делегатсем нумайĕшĕ совет делегачĕсене Октябрьти Социализмлă Аслă Революцин 28 çул тултарнă май саламланă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 8-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕтĕм тĕнчери çамрăксен конференцийĕнче ноябрĕн 7-мĕшĕ питĕ пысăк ĕç тунă кун пулса тăнă. Конференци Пĕтĕм тĕнчери демократиллĕ çамрăксен федерацийĕн уставĕ проектне йышăннă. Ноябрĕн 7-мĕшĕнчи каçхи ларура çав устава уйрăм делегацисем тӳрлетме сĕнĕпе питĕ активлăн сӳтсе-явнă.

Конференци çапла калаçса татăлнă: çав устава пĕтĕм тĕнчери теп